**Кĕр хыççăн, кĕт, сив хĕл килет…**

Кĕр хыççăн, кĕт, сив хĕл килет
Хăй йĕркипе, хăй кĕввипе.
Пире çанталăк тĕрĕслет
Пĕр шăрăхпа, пĕр сивĕпе.

Хӳме пек çӳллĕ кĕрт лартма
Пултарĕ тăвăл çĕрĕпе.
Шатăртаттарĕ шартлама, —
Çӳçенмĕп, тĕнмĕп, чĕрĕп пек.

Чунра — хавал, хулра — вăй-хал,
Чĕре — вĕри, тĕллев — таса.
Хăлатланас та ак халь-халь
Вĕçсе каяс пек космоса.

Çанталăк тĕрĕслет пире, —
Ăс-туйăма тăрăлтарать.
Сăн-пит çуталнă çиçĕмре,
Хĕвел тасалăхĕ чунра.

*Гордеев, Д. «Кĕр хыççăн, кĕт, сив хĕл килет…»: [сăвă] / Д. Гордеев // Тăван Атăл. - 2010. – № 2. – С. 84-85.*